24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ФЕВРАЛЬ
21
ШАМАТКУН
44(6069) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Революциллӗ сыхӑлӑха тата ҫӳлерех ҫӗклер

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пынӑ кунсенче Совет Союзӗнчи халӑхсем, пӗтӗм совет ҫыннисем фронтра та, тылра та патриотизмлӑ шухӑш-кӑмӑлпа пурӑнаҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле пӗтӗм совет халӑхӗ нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешет.

Тӑшман вӑйлӑ-ха, анчах та унӑн вӑйӗсем пӗрмаях чакса пыраҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах пирӗн ҫарӑн тата пирӗн ҫӗршывӑн вӑй-хӑвачӗ кунсеренех ӳсвӗҫемӗн ӳсе пырать. Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен вӑрҫӑ машинине ҫӗмӗрмеллех пыра-пыра ҫапрӗ. Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен вӑрҫӑ машинине малалла татах та хытӑрах пыра-пыра ҫапӗ. Гитлера хирӗҫ тунӑ коалицин вӑйӗсем ҫирӗпленнӗҫемӗн ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ. Германин тылӗ ҫирӗп мар, нимӗҫ захватчикӗсен ури айӗнчи ҫӗр ҫунать. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн тыл хамӑрӑн тӑван Хӗрлӗ Ҫара, хамӑрӑн тӑван Тинӗс-Ҫар Флотне пӗрмаях пулӑшса тӑрать.

Тыл тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкса ҫӗнтерӳ тума ҫирӗп шухӑш тытса пурӑннине, рабочисемпе хресченсен тата ӗҫлӗх интеллигенцийӗн моральпе политикӑллӑ пӗрлӗхӗ питӗ те ҫирӗппине пирӗн мухтавлӑ воинсем пӗлсе тӑраҫҫӗ. Пирӗн тылпа фронт пӗр-пӗринпе ҫирӗп туслӑхпа ҫыхӑнса пурӑнаҫҫӗ.

Тӑшман ҫавна пӗлсех тӑрать. Тӑшман пирӗн совет тылӗнчи ӗҫе япӑхтарасшӑн тӑрӑшать, ҫапла майпа тӑшман пирӗн Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑватне чакарасшӑн.

Ҫавнашкал сӑтӑрла ӗҫсем туса пымашкӑн тӑшман тӗрлӗрен майсемпе усӑ курать; шпионажсемпе диверсисем тӑвать, хӑйӗн агенчӗсем урлӑ, революциллӗ сыхӑлӑха ҫухатнӑ тимсӗр ҫынсем урлӑ провокациллӗ суя хыпарсем сарать. Тӑшман фронтӑн линийӗ урлӑ пирӗн тыл ӑшне хӑйӗн агенчӗсене каҫарса ярса, вӗсем урлӑ хӑйӗн хура та ирсӗр ӗҫӗсене туса пыма хӑтланать.

Яланах сыхӑ тӑрас пулать! Ӗҫри сӳрӗклӗх, дисциплинӑсӑрлӑх, организованность ҫукки тата государствӑн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи вӑрттӑнлӑхӗ ҫинчен кӑшт та пулин палкаснисем оборона ӗҫне сӑтӑр тӑвать. Тӑшман кашни шӑтӑк-ҫурӑках кӗме хӑтланать. Тӑшман ҫӑвара карса ларакан, сӳпӗлти тата сӗтӗрӗнчӗк ҫынсене шырать. Гитлерӑн шпионӗсем пуринчен ытларах вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑвакан производствӑпа, мӗнле продукци туса кӑларнипе, фронт заказӗсем мӗнле тулса пынипе, мӗнле вооруженипе боеприпассем туса кӑларнипе тата уйрӑмӑнах ҫӗнӗ конструкцисемпе, советӑн вӑрҫӑ техникинчи ҫӗнӗ хатӗрсемпе интересленет. Ҫавӑн пек секрета уҫса пани—тӑван ҫӗршыва сутни пулать. Тӑшман хӑйне валли хӳтӗрех вырӑн шырать. Вӑл ҫавнашкал хӳтӗ вырӑна совет ҫыннин чи хаклӑ пахалӑхӗ ҫинчен, революциллӗ сыхӑлӑх ҫинчен манса кайнӑ ҫӗрте ҫеҫ тупма пултарать. Ӑҫта сыхӑлӑх ҫук,—ҫавӑнта тӑшман хӑйӗн ирсӗр ӗҫне туса пырать, шире сӑтӑр тӑвать. Ӑҫта совет ҫыннисем яланах сыхӑ тӑраҫҫӗ,—ҫавӑнта тӑшмана вилӗм кӗтсе тӑрать, ҫавӑнта тӑшманӑн мӗнпур ӗҫӗсене ҫийӗнчех йӗрлесе тупаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра, отечественнӑй вӑрҫӑн хаяр кунӗсенче, инҫетри тылта пулсан та, ҫӑвара карса ларни тата сӳрӗклӗх фронт умӗнче, тӑван ҫӗршыв умӗнче питӗ пысӑк преступлени тунине пӗлтерет. Ленин ҫапла асӑрхаттарса каланӑ: «Кунта, тылра, кирек мӗнле мирлӗ ӗҫре те, кӑшт та пулин юхӑнтарниех, кӑшт та пулин сӳрӗккӗн ӗҫлениех пиншер ҫынсен пурнӑҫне пӗтерсе тӑкма пултарать». Ленин совет ҫыннисене ҫапла тума хушнӑ: кирек мӗнле ӗҫре те сыхӑлӑх, асӑрхануллӑ ӗҫлен кирлӗ, тенӗ. Сталин юлташ та яланах ҫапла вӗрентет. Тӑван ҫӗршыв шире питӗ ҫирӗп сыхӑлӑхлӑ пулма хушать, ҫакӑ вӑл тӑшмана хирӗҫ кӗрешмелли вӑйлӑ хӗҫпӑшал пулса тӑрать.

Ҫынсем пурне те витӗр сӑнаса асӑрхаса тӑнӑ ҫӗрте тата сыхӑ пулнӑ ҫӗрте тӑшман нимӗн тума та пултараймасть. Акӑ икӗ тӗслӗх. Комсомолец Зотин юлташ поездпа пынӑ чухне милиционер формине тумланнӑ пӗр палламан ҫын вагон кантӑкӗ витӗр пӑхса илсе темӗн ҫырнине тата ӳкерчӗксем тунине асӑрханӑ. Зотин юлташ ҫав «милиционера» тытса чарнӑ. Милиционер формипе тумланнӑ ҫын шпион пулнӑ.

Пӗр предприяти патӗнче охранӑра тӑракан стрелок завода кӗрсе кайма хӑтланакан пӗр палламан ҫынна тытса арестленӗ. Ҫав ҫынна ухтарнӑ чух унӑн пальто ҫухавинче нимӗҫ унтер-офицерӗн дневникне тупнӑ. Ҫак ҫын тӑшманӑн парашютисчӗ-диверсанчӗ пулнӑ, вӑл пирӗн тыла кӗрсе кайса заводра взрыв тума хатӗрленнӗ пулнӑ.

Фашистсен диверсанчӗсем уйрӑмӑнах оборона заводӗсене, электричество станцийӗсене тата транспорт предприятийӗсене кӗрсе кайма тӑрӑшаҫҫӗ. Заводсемпе фабрикӑсене, чугунҫулсене хамӑрӑн куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхласа усрас пулать! Ҫулсене сыхласа тӑма лайӑх пӗлес пулать. Ҫулсем вӗсем темиҫе пиншер километр тӑршшӗ тӑсӑлаҫҫӗ, вӗсене хӳтӗлеме хӳме туса ҫитерме май ҫук. Ҫавӑнпа та ҫулӑн кашни километрнех, кашни станциех, кашни складах, кашни деповах питӗ те лайӑх сыхлас пулать. Станцисемпе станци ҫулӗсем ҫинче ҫирӗп йӗрке туса хурас пулать, эшелонсене, уйрӑмӑнах хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем турттарса каякан эшелонсене, хытӑ хураллас пулать, грузсене ҫаратса пӗтересрен тата пӑсӑлса каясран сыхласа усрас пулать, вӑрлассине татӑклӑнах пӗтерсе пырас пулать. Вӑрӑ вӑл шпионпа, диверсантпа пӗрех, вӑл та халӑхӑн ҫавнашкал тӑшманех.

Ҫыхӑну средствисене, телефон станцисене, телеграфа сыхлас ӗҫре те ҫавнашкалах ҫирӗп йӗрке кирлӗ.

Ҫакӑн пек тӑвас пулать: тӑшманла элементсем пирӗн предприятисене кӗрсе кайма пачах та ан пултарччӑр, предприятисене кӗме ирӗк панӑ ҫынсене тӗрӗслесе тӑрас пулать.

Пӗр ҫӗрте ҫакнашкал япала пулса иртнӗ. Заводра ӗҫлекен Ф. работника такам телефон тӑрӑх чӗнсе илнӗ те, хӑй вӑл пӗр авторитетлӑ учрежденире ӗҫлекенскер тесе, Ф. работникран завод тата унӑн хӑшпӗр цехӗсем хӑш вырӑнта вырнаҫни ҫинчен каласа пама ыйтнӑ. Карма ҫӑвар тата сӳпӗлти этем Ф. ҫавӑн ҫинчен пӗтӗмпех каласа панӑ тата завода кӗме пропуск ҫырса панӑ.

Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерсе пырать, тӑшман фронтра поражени хыҫҫӑн поражени тӳссе пырать. Фронтра ӑнӑҫсӑрлӑхсем пулнӑ пирки тӑшман халӗ урса кайнӑ. Нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен халӗ хӗвеланӑҫнелле чакса пырса халӑх пурӑнакан пунктсене пӗрин хыҫҫӑн теприне хӑварса пыма тивет. Ҫав пунктсенче тӑшман тӗрлӗрен сӗтӗрӗнчӗк ҫынсемпе вӑрӑ-хурахсем тата кулак пулнӑ ҫынсем ҫине таянса ӗҫленӗ пулнӑ. Ҫавнашкал ҫынсене вӗсем бургомистр, староста, полици начальникӗ теекен чинсем парса тултарнӑ. Гитлерӑн вӑрӑ-хурахӗсем тухса тарнӑ, анчах та вӗсем, паллах, шире хирӗҫ предательле, сӑтӑрла ӗҫсем туса пымашкӑн хӑйсен ҫав тарҫисене хӑварнӑ. Ҫав фашистла ирсӗрсене тытса пӗтерсе тӑкас пулать, вӗсем шире ан сиенлеччӗр. Сутӑнчӑксене хӑйсен пӳтсӗр преступленийӗсемшӗн ответ тыттарас пулать,—ҫакнашкал задача тӑрать совет органӗсемпе кашни совет патриочӗ умӗнче.

Кам та кам тӑван ҫӗршыва сутать, кам та кам хӑйӗн ҫын сӑн-питне ҫухатса юнлӑ ирсӗрсене пулӑшакан тата вӗсен итлекен хӗҫпӑшалӗ пулса тӑрать,—ҫавна совет халӑхӗ пӗтерсе тӑкать.

Ултавлӑн тапӑнса кӗнӗ, нимӗнле законсене те пӑхӑнман тӑшмана хирӗҫ, вӑрӑ-хурахла, варварла майсемпе усӑ куракан тӑшмана хирӗҫ эпир ҫапӑҫса пыратпӑр. Пӗчӗк ачасене вӗлерекен фашистла ирсӗрсем темӗн тӗрлӗ преступленисем умӗнче те чарӑнса тӑмаҫҫӗ.

Ҫакӑн ҫинчен пирӗн манас пулмасть. Акӑ, сӑмахран, телефон тӑрӑх кӑшт асӑрханусӑртарах калаҫниех сиен туса хума пултарать. Яланах тата пур ҫӗрте те питӗ сыхлануллӑ пулас пулать—пирӗн кашни ҫын хӑйне хӑй ҫакнашкал тытмалла. Революциллӗ сыхӑлӑха ҫӳлерех ҫӗклер! Тӑшманӑн агенчӗсене каҫару пулмалла мар! Сӳпӗлтисене, ҫӑвара карса ларакансене, сӳрӗк ҫынсене ҫирӗп алӑра тытса пырас пулать. Революциллӗ сыхӑлӑх—ҫакӑ вӑл большевикла, хурҫӑ пек ҫирӗп закон пултӑр. Эпир отечественнӑй вӑрҫӑн фрончӗсенче ҫитӗнӳсем туса пырасси ҫав закона питӗ ҫирӗппӗн пӑхӑнса пурнӑҫа кӗртсе пынинчен нумай килет.

(«Правда», февралӗн 20-мӗшӗнчи умстатья).

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ
ПОСТАНОВЛЕНИ
Артиллери тӗлӗшпе ӗҫлекен конструктора В. Г. Грабин юлташа техническои войскӑсен генерал-лейтенант званине парасси ҫинчен

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ артиллери тӗлӗшпе ӗҫлекен конструктора Василий Гаврилович **Грабина** техническои войскӑсен **генерал-лейтенант** званине пама йышӑнать.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомӗн ӗҫӗсен Управляющийӗ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулхи февралӗн 20-мӗш.

ХРОНИКА

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖ, ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ ТАТА СССР ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ ЙЫШӐННӐ ПОСТАНОВЛЕНИ ТӐРӐХ, ОБОРОНАН ГОСУДАРСТВЕННЫЙ КОМИТЕЧӖН СОСТАВНЕ Л. М. КАГАНОВИЧ ЮЛТАША КӖРТНӖ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 19-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Февралӗн 19-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем, наступлени туса пырса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Фронтӑн хӑшпӗр участокӗсенче противник контратака тума хӑтланнӑ, ҫав контратакӑсене пирӗн войскӑсем, нимӗҫсене пысӑк ҫухатусем кӳрсе, сире-сире пӑрахнӑ.

Февралӗн 18-мӗшӗнче нимӗҫсен 16 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 8 самолет пӗтнӗ.

Февралӗн 19-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗҫсен 3 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Февралӗн 18-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем нимӗҫсен 14 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 570 ытла автомашинине, боеприпассемпе войскӑсем турттарса пыракан 320 лавне, 38 орудине, зенитнӑй пулеметсен 9 точкине, 31 минометне пӗтерсе тӑкнӑ тата сиенленӗ, чугунҫул ҫинчи 65 вагона ҫӗмӗрнӗ, 7 эшелона ҫунтарса янӑ, боеприпассемпе горючисен 5 складне взрыв туса сирпӗтернӗ, противник пехотине 6 батальона ҫити сапаласа янӑ тата вӗсенчен пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Галат юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковӑй часть, противника хирӗҫ ҫапӑҫса, юлашки эрне хушшинче нимӗҫсенне 7 танк, тӗрлӗрен калибрлӑ 26 оруди, зенитнӑй пулеметсен 12 установкине, 14 пулемет, 5 миномет, 51 автомашина, 22 мотоцикл, 6 радиостанци, 25 лаша, 57 лав тата ытти ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 2.500 ҫын вилсе пӗтнӗ.

* * *

Совет танкӗсен подразделенийӗ, Тарасов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫпа пӗрле пулса тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫса, нимӗҫсене халӑх пурӑнакан темиҫе пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 500 ҫынна ҫити вилсе пӗтнӗ. Тепӗр участокра Ягодин юлташ командир пулса ертсе пыракан часть нимӗҫсенне 15 пулемет, 2 оруди тата 145 винтовка тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 вилли выртса юлнӑ.

* * *

Лейтенант Минаев, разведчиксен группипе пӗрле, тӑшманӑн ДЗОТ-ӗ патне йӑпшӑнса пынӑ та гранатӑсем ывӑтнӑ. ДЗОТ-ӑн ишӗлчӗкӗсем айӗнче 12 гитлеровец пӗтнӗ.

* * *

Украина партизанӗсен группи, М. юлташ командир пулса ертсе пынипе, нимӗҫсен чаҫӗн штабӗ вырнаҫнӑ ҫурта взрыв туса сирпӗтернӗ те нимӗҫсен офицерӗсемпе салтакӗсене 10 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансем, кирлӗ документсем нумай тытса илсе, Хӗрлӗ Ҫарӑн командованине ҫырса панӑ. Партизансен О. юлташ ертсе пыракан тепӗр группи нимӗҫ салтакӗсене турттарса пыракан поезда ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 222-мӗш пехотнӑй полкӗнчи 2-мӗш батальон командирӗн Шехенбергӑн приказне тытса илнӗ. Приказра ҫапла каланӑ: «Юлашки вӑхӑтра батальонра шалти службӑн уставне пӑсакан салтаксем тата хӑйсен юлташӗсене ҫаратакансем хӑрушла нумайланса кайрӗҫ. Дисциплина, уйрӑмах вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, пысӑк вырӑн йышӑнмине шута илсе, эпӗ господин-рота командирӗсене ҫакӑн пек япаласем малалла та пулассинчен сыхланма хушатӑп».

Нимӗҫсен командованийӗ хӑйӗн салтакӗсене вӑрӑ-хурахла ӗҫсем тума пур майсемпе те вӗрентсе пыни, вӑрҫӑра кашни салтакӑн харпӑр-хӑй интересӗн туйӑмне аталантарса пыни пуриншӗн те паллӑ.

Халӗ ӗнтӗ ҫӳлте асӑннӑ приказран гитлеровецсем хӑйсен бандитла политикин ҫимӗҫӗсене туянни курӑнса тӑрать. Нимӗҫ салтакӗсем алӑ айне мӗн лекнине пурне те хӗстерме, ҫаратма тытӑннӑ. Вӗсем халӗ пӗр-пӗрне те ҫаратаҫҫӗ. Шехенберг, хӑйӗн пӗтӗмпех иртӗхсе кайнӑ бандичӗсене тытса чарас тесе, рота командирӗсем умне пурнӑҫлама май ҫук задача лартнӑ. Гитлер бандине пӗтӗмпех арканса кайса пӗтессинчен нимӗнле приказ та ҫӑлаймӗ.

* * *

Харьков облаҫӗнчи Великая Камышеваха ялӗнче нимӗҫсем шкула, ялти клуба, ялсовет ҫуртне, аптекӑна тата колхозниксен 15 килне ҫунтарса янӑ.

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем ялти ҫынсене нимӗн юлмиччен ҫаратнӑ. Кӑлт хирӗҫ тӑнӑшӑнах старикӗсемпе ачасене тата хӗрарӑмсене хӗнесе пӗтернӗ, пере-пере вӗлернӗ.

* * *

«Вологдолес» трестӗн Явиньгски вӑрман пункчӗн коллективӗ йӗлтӗрсем туса кӑларассине хӑйӗн вӑйӗпех механизацилерӗ. Вӑрман пункчӗн коллективӗ Хӗрлӗ Ҫар валли йӗлтӗрсем туса кӑларассине 10 хут ӳстернӗ.

Февралӗн 20-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 20-мӗш ҫӗрӗн тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ активлӑн ҫапӑҫнӑ.

* * *

Ланский юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн артиллери чаҫӗ юлашки эрнесем хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 5 ДЗОТ-не, 4 блиндажне тата ҫирӗплетнӗ ытти 50 точкине противникӑн пехотипе пӗрлех, минометсен икӗ батарейине, виҫӗ орудине, 17 пулеметне, 3 наблюдательнӑй пунктне ҫӗмӗрнӗ тата пӗтерсе тӑкнӑ. Артиллеристсем противникӑн 3 контратакине сирсе пӑрахнӑ, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 400 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Калинин фронтӗнче кӗрешекен пирӗн пӗр часть хаяр ҫапӑҫу хыҫҫӑн халӑх пурӑнакан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ Л. пунктне пырса кӗнӗ те нимӗҫсен ҫав ялта пулнӑ 400 ҫынран тӑракан гарнизонне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн боецсем тытса илнӗ трофейӑсем хушшинче 3 танк, 3 оруди тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсем пур.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнче кӗрешекен пӗр чаҫри артиллеристсем, хӑйсен орудийӗсенчен персе, нимӗҫсен чугунҫул ҫинчи эшелонне аркатнӑ, горючи тултарнӑ 2 цистернӑна вут тӗртсе янӑ, тӑшманӑн пушар сӳнтерме хӑтланнӑ икӗ ротине сапаласа янӑ.

* * *

Песочин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри боецсем, противникӑн контратакисене сирсе пӑрахса, нимӗҫсен 4 танкне ҫӗмӗрнӗ тата тӑшманӑн салтакӗсене 100 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

С. ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура Шилов юлташӑн пулеметнӑй расчетне хирӗҫ нимӗҫсем танкпа автоматчиксен пысӑк ушкӑнне кӗртсе янӑ. Хӑюллӑ пулеметчиксем пӗр ҫуртра пытанса, фашистсене ирттерсе янӑ та нимӗҫсен автоматчикӗсем ҫине вӑйлӑн пеме тытӑннӑ. Тӗл персе вӗсем 30 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ. Шилов юлташ аманнӑ пулин те ҫапӑҫуран пӑрахса тухман, противникӑн салтакӗсене татах темиҫе ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Курск облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен В. юлташӑн партизанла отрячӗ О. пункт ҫывӑхӗнче засада тунӑ. Партизансем тӑшманӑн колонни ҫине кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннӑ та нимӗҫсенне виҫӗ тупӑ тата ҫар пурлӑхӗсем тиенӗ 27 лав тытса илнӗ. Ҫак отрядри партизансен группи нимӗҫсем вырнаҫнӑ ял ҫине пырса тапӑннӑ. Пулса иртнӗ ҫапӑҫура 15 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, ыттисем тарнӑ.

* * *

Нимӗҫсен пӗрремӗш танковӑй дивизийӗнчен хӑйӗн ирӗкӗпе тыткӑна парӑннӑ салтак, национальноҫӗпе поляк пулса тӑраканскер, Юзеф Лешинский ҫапла каласа панӑ: «Манӑн пур тӑвансем те мана вырӑссене хирӗҫ ан вӑрҫ, май килсенех вӗсене тыткӑна парӑн, терӗҫ. Январӗн 16-мӗшӗнче 6-мӗшпе 8-мӗш ротӑсене наступлени тума приказ пачӗҫ. Ҫакӑнччен нумаях та пулмасть малтан эпир питӗ пысӑк ҫухатусем тӳснӗччӗ. Отделенири 14 ҫынран чӗррисем 4 ҫын кӑна юлчӗҫ. Вырӑссем питӗ вӑйлӑн персе тӑчӗҫ, пирӗн салтаксем наступлени тума чарӑнчӗҫ. Вара офицерсем хӑйсен салтакӗсене персе вӗлерме тытӑнчӗҫ. Хӑйсен командирӗсем персе вӗлернипе нимӗҫсен нумай салтакӗсем пӗтрӗҫ. Мана офицер револьвертан персе урарап амантрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн офицерсем 40 салтакпа пӗрле машинӑсем ҫине ларса тарчӗҫ. Эпӗ, тӗл килсе тухнипе усӑ курса, Хӗрлӗ Ҫар аллине тыткӑна парӑнтӑм. Эпӗ Гитлер йӗркине кураймастӑп. Эпӗ нимӗҫ салтакӗсем вырӑс хӗрарӑмӗсемпе ачисене урама сивӗ ҫӗре хӑваласа кӑларнине тата ҫурчӗсене вут тивертсе ҫунтарса янине куртӑм. Оккупациленӗ районсенче гитлеровецсем полякӗсемпе вырӑс ҫыннисене вӗлерсе пӗтереҫҫӗ».

* * *

Сталинградри тракторсем тӑвакан заводри станочницӑсен Числова, Гальшкина, Антонова юлташсем ертсе пыракан бригадисем кашни кунах 3-шер норма тултараҫҫӗ. Обрубщиксен Сергеев юлташ ертсе пыракан бригади задание 4 хута яхӑн ирттерсе тултарать. Слесарьсем Гамаюнов, Лобанов, Зубков юлташсем кашни кунах нормӑна 350 шар процент тултараҫҫӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Пуҫарулӑхпа хӑюлӑх

КАНТАР-ХӖВЕЛАНАҪ ФРОНЧӖ, февралӗн 19-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Н-ски стрелковӑй часть, Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ куна ҫапӑҫури чаплӑ ӗҫсемпе кӗтсе илет. Танкистсемпе тата артиллеристсемпе таччӑн ҫыхӑнса тӑрса, вӑл противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пысӑк сиен кӳрет, тӑшман оборонин ӑшне хӑюллӑн саваллана кӗрсе каять, нимӗҫсен огневой точкисене арката-арката тӑкать, вӗсен хирӗҫ тӑмалли вырӑнӗсене ҫӗмӗрет. Ҫав чаҫӑн боецӗсем пӗр кун хушшинчех нимӗҫсен 400 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ, минометсен 3 батарейине пусарса лартнӑ.

Пирӗн пехотинецсене яланах ҫапӑҫури чеелӗх, тавҫӑрулӑх, маневрсем ҫӑмӑллӑн та хӑвӑрт тума пултарни тата пуҫарулӑх пулӑшса тӑрать, ҫакӑ вӑл боецсене нимӗҫсен флангӗсем патне пырса тухма, вӗсен тылне кӗрсе кайма, нимӗҫсене ҫиҫӗмле хӑвӑрт тата вӑйлӑн пырса ҫапма пулӑшать. К. ялӗн районӗнче Мурзаев лейтенантӑн подразделенийӗн пӗр пысӑк мар группи нимӗҫсен ротине тӗл пулнӑ. Боецсем юр ӑшне кӗрсе выртнӑ та фашистсене тивӗҫлипе кӗтсе илме шут тытнӑ. Пирӗн хӑюллӑ 27 боец тӑшман салтакӗсен вут-хӗмлӗ умки вӑррине кунӗпе тытӑнса тӑнӑ. Унтан Мурзаев лейтенант юр ӑшӗнчи окопран сиксе тухнӑ та хӑйсен хастарлӑ боецӗсене тӑшман ҫинелле илсе кайнӑ. «Сталиншӑн! Тӑван ҫӗршывшӑн!» тесе кӑшкӑрса, боецсем атакӑна кӗрсе кайнӑ. Хӑюлӑхпа пуҫарулӑх ӗҫе татса панӑ. Нимӗҫсен ротине ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче 30 виле тата пӑрса ларнӑ 25 салтакне пӑрахса хӑварса, фашистсем тарнӑ. Подмазко сержантӑн-коммунистӑн чаплӑ ӗҫӗ пуриншӗн те паллӑ пулса тӑнӑ. Вӑл нимӗҫсем ҫирӗплетнӗ яла чи малтан ҫӗмӗрсе кӗнӗ те пӗр сехет хушшинче 10 фашиста пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу чи хӗрсе кайнӑ вӑхӑтра унӑн патронӗсем пӗтсе ҫитнӗ. Маскировкӑсем туса, ҫырансем тӑрӑх, кӗртсем хӳттипе хӑйӗншисем патне кайма пулатчӗ ӗнтӗ. Анчах хастарлӑ боец ун пек туман. Вӑл аякра ларакан пулемет патне шуса пынӑ та, ӑна тӑшман еннелле ҫавӑрса лартса, тӑшмана хӑйӗн хӗҫпӑшалӗпех ҫунтарма пуҫланӗ. Ҫав ҫапӑҫура Подмазко 20 нимӗҫ оккупантне персе вӗлернӗ те тытса илнӗ пулемета хӑйӗн подразделенине илсе таврӑннӑ.

Фашистсен контратаки ӑнӑҫсӑр пулнӑ

ХӖВЕЛАНАҪ ФРОНЧӖН КАНТАРТИ УЧАСТОКӖ. Пӗр районра нимӗҫсем, хӑйсен позицине каялла таврӑрма тӑрӑшса, питӗ вӑйлӑ контратакӑсем тунӑ. Пӗр кун хушшинче пирӗн чаҫсем противникӑн ултӑ контратакине сирсе пӑрахнӑ, нимӗҫсене питӗ пысӑк сиен кӳрсе, каялла чактарнӑ. Пирӗн пӗр часть ҫапӑҫнӑ участокра нимӗҫсем 200 виле, тепӗр участокра—240 виле пӑрахса хӑварнӑ.

Пӗр ялӑн районӗнче фашистсен 20 автоматчикӗ пирӗн малти подразделенисен тылне кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Вӗсене хупӑрласа илнӗ те пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫак районра пирӗн боецсем противникӑнне 11 пулемет, 30 винтовка тытса илнӗ.

Н-ски соединенин чаҫӗсем пилӗк кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫ оккупанчӗсене 1.500 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ, тӑшманӑнне 5 тупӑ, 8 миномет, 6 станковӑй тата 40 ручной пулемет, 28 автомат, 223 винтовка тытса илнӗ.

Тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн та хӑюллӑн кӗрешекен пирӗн боецсемпе командирсем кашни кунах геройлӑхӑн ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ тӗслӗхӗсене кӑтартаҫҫӗ. Автоматчик старши сержант Путятин нимӗҫсене хирӗҫ пулса иртнӗ юлашки ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 20 салтакне персе пӑрахнӑ тата миномет расчетне пӗтерсе тӑкнӑ. Вара вӑл ҫав саманталах нимӗҫсенчен тытса илнӗ минометран тӑшмансем ҫине пеме тытӑннӑ. Рота политрукӗ Софронов юлташа мина ванчӑкӗ лексе амантнӑ. Вӑл суранне ҫыхнӑ та хӑйӗн боецӗсене татах та ытларах хавхалантарса малалла ертсе кайнӑ. Софронов юлташ яла пуриншӗнчен малтан ҫӗмӗрсе кӗнисен ретӗнче пулнӑ. Вӑл хӑй 10 фашиста пӗтерсе тӑкнӑ.

(«Красная звезда» хаҫатран).

Кӗтмен ҫӗртен пырса ҫапни

КАЛИНИН ФРОНЧӖ, февралӗн 17-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Пирӗн фронтӑн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен Н-ски часть противник пехотин группировкине кӗтмен ҫӗртен пырса ҫапса аркатса тӑкнӑ. Тӑшман пехотин юлашкийӗсем, Н. ялне тарса кӗрсе, нимӗҫсен ытти подразделенийӗсемпе пӗрле ҫав ялта ҫирӗпленсе лармa тӑрӑшнӑ. Пирӗн боецсем таракан нимӗҫ салтакӗсене сывлӑш ҫавӑрма памасӑр Н. ялне ҫӗмӗрсе кӗнӗ, нимӗҫсене ку ялтан та ҫапса кӑларнӑ. Пирӗн чаҫӑн подразделенийӗсенчен пӗри, тепӗр ял патӗнче противникӑн икӗ ротине ҫапса аркатса, 300 гитлеровеца яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ. Чӗрӗ тӑрса юлнӑ нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем юнашар ялсене тарса саланнӑ, анчах кунта вӗсене пирӗн разведчиксем тӗл пулса пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Ҫапла ӗнтӗ, совет воинӗсем пӗр пуҫланӑ ӗҫе вӗҫне ҫитиех туса ҫитереҫҫӗ—тӑшмана мӗн пӗтерсе тӑкиччененех хӗсӗрлесе, хӑваласа пыраҫҫӗ.

Фашистсем урнӑ пек контратакӑсем тунӑ, анчах пирӗн боецсем ҫав контратакӑсене фашистсене питӗ пысӑк ҫухатусем кӳрсе сире-сире пыраҫҫӗ. Нумаях пулмасть гитлеровецсем 17 танк хӳттипе пирӗн подразделенине хирӗҫ пит пысӑк вӑйсем янӑ. Старши лейтенант Силак тата политрук Маслов «Тӑван ҫӗршывшӑн, малалла!» тесе кӑшкӑрса боецсене атакӑна ҫӗкленӗ. Ҫавтери хӑвӑрт та вӑйлӑн пырса ҫапнӑ пирки нимӗҫсем чӑтса тӑрайман та каялла чакма пуҫланӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче вӗсем ҫӗмӗрӗлнӗ 5 танк, хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен виллисен купине пӑрахса хӑварнӑ.

Пирӗн артиллеристсен ӗҫӗсене мухтаса калама сӑмах та ҫитмест. Пӗр ялшӑн пулнӑ ҫапӑҫура пирӗн чаҫсене малалла каймашкӑн противникӑн огневой точки чарса тӑнӑ. Батарея комиссарӗ Кувшинов тӳррӗн тӗллесе персе фашистсен ҫак йӑвине пӗтерсе тӑкнӑ: нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 6 ҫынна вӗлернӗ, 6 пулемет, 8 миномет, боеприпассем нумай тытса илнӗ. Акименко лейтенантӑн батарейи тӗл перет. Разведка противникӑн контратака тума хатӗрленнӗ пехоти пухӑнса тӑни ҫинчен пӗлтернӗ. Акименко тӗллеве часах шыраса тупнӑ та, 8 снарядран 6 снарядне шӑп фашистсен ушкӑнӗ ҫине лектернӗ. Артиллери снарядӗсем тӗл тивнипе пула 200 фашист вилнӗ, вӗсен 6 пулеметӗ тата танксене хирӗҫ пемелли орудийӗ пӗтнӗ. Тӑшманӑн контратаки пуҫланмасӑрах путланса ларнӑ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Тихвина юсаса йӗркене кӗртеҫҫӗ

ТИХВИН, февралӗн 18-мӗш. (ТАСС). Тихвин нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑранпа икӗ уйӑх ҫитрӗ. Хӗрлӗ Ҫар хӗснипе нимӗҫсем чакса тухса кайсанах, хулара та, районра та творчестлӑ вӑйлӑ хӗрӳ ӗҫ пуҫланчӗ. Районри организацисем тата каялла таврӑннӑ халӑх хулапа колхозсене юсама хӗрӳллӗн тытӑнчӗҫ.

Икӗ уйӑх хушшинче Тихвинра 300 ҫурта яхӑн юсанӑ, ҫыхӑнӑва йӗркеленӗ, телефон станцине ӗҫе янӑ, хулари радиотрансляци узелӗ ӗҫлеме пуҫланӑ. Учрежденисемпе предприятисем иртнӗ кунсенче электричество ҫутти илчӗҫ. Райпромкомбинат ӗҫе тытӑннӑ. Леспромхоз вӑрман хатӗрлеме пуҫланӑ.

Халӑхӑн пурнӑҫӗ йӑла тӗлӗшӗнчен кашни кун лайӑхланса пырать. Халӗ больница, амбулатори, аптека ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫитес ҫывӑх кунсенчех татах тепӗр икӗ больница, яслӗсем уҫӑлаҫҫӗ, икӗ детдомӑн ҫуртне юсаса хатӗрленӗ. Ялсоветӗсенче нумайӑшӗсенче медицина пункчӗсем уҫнӑ.

Колхозсенче те хуҫалӑха юсас тӗлӗшпе хӗрсех ӗҫлеҫҫӗ. Ҫуртӗсене юсаҫҫӗ, ялхуҫалӑх ӗҫхатӗрӗсене йӗркене кӗртеҫҫӗ. Фашистсем юхӑнтарса, аркатса хӑварнӑ колхозсене нимӗҫсен пусмӑрӗ айне лекмен ялсенчи колхозниксем пур майсемпе те пулӑшса пыраҫҫӗ.

Сурӑхсене пысӑк ҫӗкленӳпе хатӗрленеҫҫӗ. Нумаях пулмасть колхоз председателӗсем, бригадир полеводсем вӗҫкӗ срокла курӑран вӗренсе тухрӗҫ. Животноводсен, конюхсен, кӗтӳҫсен вӗҫкӗ срокла курсӗсене уҫма палӑртнӑ.

ВӐРҪӐ ВӐХӐТӖНЧИ НАЛОГА ТӲЛЕҪҪӖ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Исаково» колхоз членӗсем государство умӗнчи укҫа-тенкӗ парӑмӗсене срокчен тӳлесе татнипе Хӗрлӗ Ҫара пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем Виҫҫӗмӗш пятилетка (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑм) Заемӗшӗн 3065 тенкӗ январӗн 15-мӗш тӗлне пӗтӗмпех тӳлесе татнӑ.

Халӗ колхозниксем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налога Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ тӗле 50 процентран кая мар тӳлессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Нумай колхозниксем алла извещени илсенех укҫисене те ҫийӗнтех тӳлеҫҫӗ. Ҫапла 63 ҫулти Т. Павлов—200 тенкӗ, А. Тимофеева—200 тенкӗ, 62 ҫулти Е. Николаева—200 тенкӗ, Е. Петров—200 тенкӗ, Н. Егорова—200 тенкӗ тата ыттисем те вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налог укҫине тӳлерӗҫ.

Я. НИКИТИН.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илер!

Совет халăхĕ хăйĕн паттăр воинĕсем патне парнесем ярать

ÇĔРПУ. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа районри ĕçсыннисем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче геройла çапăçакан хĕрлĕ воинсем патне парнесем ярса пачĕç. Боецсем патне парнесем йĕркелесе яма уйăрнă комиссин çак кунсенче хĕрӳллĕн ĕçлемелле пулчĕ. Кашни колхозранах парнесем килсе тăчĕç. Районри колхозникĕсемпе служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пурĕ 708 килограмм çăнăх, 205 килограмм сухари, 199 килограмм аш-какай, 117 чăх, 14 килограмм çу, 10 килограмм пыл, 17 килограмм махорка тата енчĕксем, çăмса тутрисем, бритвăсем нумай леçсе пачĕç.

Районри комисси халăх парнеленĕ çăнăхран, аш-какайран боецсем валли 40 пин пельмен туса хатĕрлерĕ, 2 пин булка пĕçерчĕ. Февралĕн 18-мĕшĕнче парнесене ещĕксем ăшне хурса боецсем патне ăсатрĕç. Парнесемпе пĕрле боецсем, командирсем, политработниксем патне саламлă çырусем нумай ячĕç.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Февралĕн 18-мĕш тĕлне предприятисемпе учрежденисем тата колхозсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне пурĕ 208 посылка янă. Чăваштортра ĕçлекенсем фронтовиксем патне пурĕ 9 посылка янă. ФЗО шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекен мастерсем—7 посылка, Древкомбинат—пурĕ 583 килограмлăх 54 посылка, «Большевик» завод—40 килограмлăх темиçе посылка ярса панă. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 78 килограмм сухари тата типĕтнĕ аш ячĕç.

Х. ЛИСИН.

* * *

ИШЛЕЙ. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче геройла çапăçакан Хĕрлĕ Çар воинĕсем патне районри ĕçсынникĕсем пурĕ 1533 килограмм сухари, 26 килограмм çу, 266 килограмм ытла аш-какай, 24 килограмм махорка, 111 çăмарта, 120 табак енчĕкĕ, 60 килограмм супăнь янă. Кунсăр пуçне районри ĕçсыннисем хăйсем шефа илнĕ госпиталь валли уяв парнисем хатĕрлеме 1.366 тенкĕ укça пухса панă.

Ф. САЗОНОВ.

Хула ĕçсыннийĕсем фронта пулăшаççĕ

Статистика управленийĕнче ĕçлекен служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тăрăшсах хатĕрлеççĕ. Нумаях пулмасть служащисем çамран 30 мăшăр носки çыхрĕç, 30 мăшăр мамăк тирлĕ алса çĕлерĕç. Вĕсене пурне те уяв ячĕпе фронтовиксене ярса пачĕç. Кунсăр пуçне фронтри боецсем патне вĕсем печени, конфет тата ытти нумай тĕрлĕ парнесем хурса посылка ячĕç, халĕ госпитальри боецсем валли парнесем хатĕрлеççĕ.

Çавăн пекех Стройтрест рабочийĕсемпе служащийĕсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çак кунсенче 4 кĕрĕк пиншак, 3 мăшăр çăматă, 16 çĕлĕк, 2 шарф, 6 енчĕк, 2 мăшăр перчатка пухса пачĕç тата уяв ячĕпе фронта паха посылка ячĕç.

Швейстройсоюзра ĕçлекен работницăсем, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна хатĕрленсе, фронтри боецсем валли ватка хурса 5 мăшăр куртка тата шалавар çĕлетрĕç, çăмран 20 мăшăр носки çыхрĕç; «Красный кустарь» артельри рабочисем 15 мăшăр алшиш çыхнă, 7 çĕлĕк çĕленĕ. Халĕ ку япаласене пурне те фронта ярса панă.

Т. КЛЕМЕНТЬЕВА.

Васкасах вăрман хатĕрлеççĕ

ВĂРНАР. Кĕçтемĕрти Крупская ячĕпе тăракан колхоз тăрăшсах вăрман хатĕрлет. Ку колхозран вăрман хатĕрлевĕнче куллен 25 çын çуран, 10 лаша ĕçлемелле пулсан, кулленех 42 çын çуран, 15 лаша ĕçлет. Колхоз председателĕ Григорьев юлташ вăрманта ĕçлекенсем валли столовăй организациленĕ. Ĕçе лайăх йĕркелес тесе, вăрманта ĕçлекенсене 4 звенона уйăрнă. Вĕсем кашни кун тухса каяççĕ те васкасах пĕр-пĕринпе тупăшса ĕçлеççĕ. Чылайĕшĕсем ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Сăмахран, Филиппов, Якушин, Саяркин юлташсем куллеххи нормăна 110—115 процент таран тултараççĕ. Спиридонова, Кириллова, Тверкова юлташсем те сменăри нормăна 105 процент таран тултарса пыраççĕ. Вăрман касаканĕсемпе турттаракансен пуçарăвĕпе ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн саралса кайрĕ. Звенопа звено, бригадăпа бригада ăмăртса ĕçлеççĕ. Халĕ Крупская ячĕпе тăракан колхоз Мамалай колхозне ăмăртăва чĕнчĕ.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне те лайăх организацилерĕ. Каçхине ĕç вĕçленнĕ хыççăн бараксенче Мелюшин юлташ Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерĕвне ăнлантарса парать. Бараксенче хаçатсем пур, анчах домино, шашка, шахматсем çук. Çавăн пекех вĕретнĕ шыв çителĕклĕ парса тăмаççĕ.

Эпир пĕррĕмĕш квартал планне мартăн 25-мĕш тĕлне тултарассишĕн ăмăртса ĕçлетпĕр, ытти колхозсене те хамăр пек ĕçлеме чĕнетпĕр.

Н. СКВОРЦОВ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа

Столицăри районсенче

Мускав хулинчи районсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине кĕтсе илме хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ.

Первомайски районра февралĕн 21-мĕшĕнче «Серп и Молот» заводĕн клубĕнче оборона [illegible] Кунта отечественнăй вăрçă [illegible] отличникĕсем, [illegible] пулăшĕ.

Çар чаçĕсене тата шефа [illegible] районĕнчи [illegible]

Хисеплĕ хула пултарулăх кружокĕсем [illegible] хатĕрленеççĕ. Вĕсем çар чаçĕсенчи [illegible] пултарулăхĕсене вечерсемпе пухусенче, çар чаçĕсемпе госпитальсенче кăтартса параççĕ.

Райком агитпункчĕ отечественнăй вăрçăн профейĕсене кăтартма организациленĕ выставка палла вырăн йышăнса тăрать. Выставкăна нумай заводсен цехĕсенче кăтартнă, рабочисем ăна питĕ интересленсе пăхаççĕ. Ку таранччен ăна 10 пин çынна яхăн пăхма та ĕлкĕрнĕ.

Таганка районра подшипниксен заводĕнче, автомашинăсем [illegible]

Районăн боецсене парнесем ярса пама [illegible] кучченеçсем, конфетсем, колбаса, [illegible] ытти япаласем чиксе 3.000 посылка ярса панă. Районри госпитальсенче выртакан боецсем те уяв ячĕпе нумай парнесем илеççĕ.

Красногвардейски районри ĕçсыннисем боецсем валли кĕнекесем пухнă. Çар чаçĕсене 5.000 ытла том илемлĕ литература тата музыка инструменчĕсем нумай ярса панă. (ТАСС).

Д. Шостаковичăн çиччĕмĕш симфонийĕ

КУЙБЫШЕВ, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Куйбышеври Культура двоцĕнче ССР Союзĕн Пысăк театрĕ Д. Шостакович композиторăн питĕ паха çĕнĕ произведенине—çиччĕмĕш симфонине çине тăрсах хатĕрлет. Халĕ репетицие сцена çинче тăваççĕ. Дирижерĕ—ССР Союзĕн халăх артисчĕ орденоносец С. Самосуд.

Д. Шостакович, юлашки репетицире пулнăскер, хăйĕн шухăшĕсене ТАСС корреспондентне каласа панă:

— Выляни манăн кăмăла каять. Пысăк театрăн питĕ лайăх оркестрĕ тата унăн дирижерĕ С. А. Самосуд произведение лайăх янăракан турĕç. Эпĕ Ленинграда хӳтĕленин паттăр эпопейи вăхăтĕнче совет патриочĕсен паттăр образĕсене кисеплесе çырнă произведени пан тăклă алăра.

С. Самосуд çĕнĕ симфони çинчен хавхаланса каласа парать.

Тĕнчери симфони музыкинче Шостаковичăн çиччĕмĕш симфонийĕ пек пысăк произведени урăх çук. Вăл Чайковскин улттăмĕш симфонийĕ евĕрлĕ иртнĕ ĕмĕрти палла музыка произведенийĕсемпе юнашар тăрать.

Шостаковичăн çиччĕмĕш симфонине выляса парассине ССР Союзĕнче çеç мар, унăн тулашĕнче те хытă кĕтеççĕ. Çавăн пирки те пĕррĕмĕш концерта совет радиостанцийĕсемпе ютçĕршывсен радиостанцийĕсем урлă трансляцилеççĕ. Пĕррĕмĕш концерт февраль уйăхĕн вĕçĕнче е март уйăхĕн пуçламăшĕнче пулать.

Болгари халăхĕ ССР Союзне тăванла кăмăллани

СОФИЯ, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар тата мĕнпур совет халăхĕ гитлерла йыткĕтĕвĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешни Болгари халăхĕн анлă массисене хаваслантарать. Болгари халăхĕн тĕрлĕ сийĕсем, тĕрлĕ ĕçре ĕçлекен çынсем Болгарири общественăллă деятельсем патне янă хăйсен пиншер çырăвĕсенче Гитлер чуралантарма хапсăнакан пур славян халăхĕсен ирĕклĕхĕшĕн те кĕрешекен тăванла вырăс халăхне ăшшăн кăмăлланине каласа параççĕ. Çав çырусенче вĕсем Болгари халăхне тăван вырăссене хирĕç çапăçтарма тăрăшакан фашистла захватчиксене курайманнине калаççĕ.

Аяларахра эпир пиншер çырусенчен суйласа илнĕ уйрăм çырусен татăкĕсене пичетлетпĕр. Çав çырусене Болгари халăхĕн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсем Совет Союзĕн халăхĕсене янă.

* * *

МУХТАВЛĂ КРАСНОАРМЕЕЦСЕМ!

Сире, паттăр воинсем, гитлерла йыткĕтĕвĕсене çĕнтерсе пынă ятпа Болгари çамрăкĕсем саламлаççĕ. Эпир сирĕн ăнăçлă ĕçĕрсене хавасланса сăнаса пыратпăр. Сирĕн паттăрлăх пирĕн вăйсене çĕклентерет, пире кĕрешĕве тухма хавхалантарать. Эпир Хĕрлĕ Çарăн ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕве пур майсемпе те пулăшса пыма хатĕр, унăн çĕнтерĕвне шанса, ĕненсе тăратпăр.

Нимĕçсем пирĕн çĕршыва чуралантарса çаратрĕç, анчах та эпир Болгари çамрăкĕсен ятне вараламăпăр, эпир хамăрăн халăхăн чыслăхĕшĕн, славянство чыслăхĕшĕн кĕрешетпĕр. Славянство «аслă расăн» пусмăрĕ айĕнче пулас çук. Часах ак славянсен çĕршывĕ нимĕçсен виллисемпе витĕнĕ.

Эпир халăхсене çитес çывăх вăхăтрах ирĕке кăларассине шанатпăр! Пирĕнтен пирĕн тăванла хĕрӳллĕ салама йышăнăр.

Çамрăксен группи.

* * *

Совет халăхĕсен телейлĕ пурнăçне аркатма сирĕн мухтавлă çĕршывăра çĕмĕрсе кĕнĕ Германин йыткĕтĕвĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара эпир, Болгари рабочийĕсем, чĕререн юратса хисеплетпĕр. Эпир Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе пирки иккĕленместпĕр, мĕншĕн тесен вăл гитлерла бандăсене хăвăрăн çĕршывăртан хăваласа кăларасшăн çеç мар, çавăнпа пĕрлех вăл тата чуралантарнă мĕнпур халăхсене ирĕке кăларасшăн те кĕрешет.

Хăйĕн кĕрешĕвĕнче Хĕрлĕ Çар ăна пусмăрти халăхсем, хăйсен çĕршывĕсенче оккупантсене хирĕç мĕнле майпа та пулин кĕрешекенскерсем, пулăшса пынине туйса пырать. Болгари халăхĕ те çав пусмăртисен шутне кĕрет. Болгари халăхне нимĕç фашисчĕсем пур майсемпе те Совет Союзне хирĕç вăрçа явăçтарма тăрăшаççĕ, анчах Болгари халăхĕ хăйĕн вырăнĕнче çирĕп тăрать, чухăнлăх, выçлăхпа чуралăх çеç кӳрекен палачсен юнлă аллисене вăл касса татма пултарать.

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!

Рабочисен группи.

МУХТАВЛĂ ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇАМРĂК БОЕЦĔСЕМ!

Эпир, Болгари çамрăкĕсем, ылханлă фашизма хирĕç пыракан сирĕн паттăр кĕрешĕве тимлĕн сăнаса тăратпăр. Урса кайнă гитлерла йыткĕтĕвĕсене эсир тăтăшах пыра-пыра çапни пире çавтери хаваслантарать. Сирĕн кĕрешӳ—пирĕн кĕрешӳ, сирĕн ăнăçусем—пирĕн ăнăçусем. Эсир часах çĕнтерӳ тăвассине эпир кунран кун ытларах ĕненсе пыратпăр. Çак çĕнтерӳ Европăри нумай миллионлă халăхсене, çав шутрах пирĕн халăха та, ирĕке кăларĕ.

Эпир, Болгари çамрăкĕсем, сирĕн геройлăхпа хавхаланнăскерсем, фашистла ирсĕр пусмăрçăсемпе çаратуçăсене çавтери кураймансккерсем, сăхă тискер кайăксене хамăр çĕршывран хăваласа кăларса яма тата вĕсен хамăр патăмăрти хӳрешкисене тивĕçлипе тавăрма мĕнпур вăйпа хатĕрленетпĕр.

Пур красноармеецсене те Болгарири çамрăк патриотсенчен тăванла хĕрӳллĕ салам!

Фашизма—вилĕм!

Пирĕн халăхсен туслăхĕ сывă пултăр!

Болгарири икĕ çамрăк çын.

ХĔВЕЛТУХĂÇ ФРОНТĔНЧИ БОЕЦСЕМ!

Гитлерăн тискер кайăкла бандисене хирĕç пыракан кĕрешӳре эсир паттăррăн та геройла çапăçнишĕн эпир мĕнтери хавасланнине каласа пама сăмах та çитмест. Эсир хăвăрăн ирĕклĕхĕршĕн çеç мар, пусмăрти пур халăхсен ирĕклĕхĕшĕн те кĕрешнине эпир пĕлетпĕр, çавăнпа та эпир çапла тупа туса сăмах паратпăр: кирлĕ пулсан, эсир халĕ юн тăкса хӳтĕлекен тĕрĕс ĕçшĕн эпир сирĕнпе çума-çумăн тăрса кĕрешме яланах хатĕр.

Сывă пултăр аслă çулпуç Сталин!

Сывă пултăр никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар!

Болгари çынни.

СЫВĂ-И ХАКЛĂ КРАСНОАРМЕЕЦСЕМ!

Эсир хăвăрăн тăван çĕршывăршăн паттăррăн кĕрешни пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе савăнтарать. Эсир камсем пулнине тата мĕн тума пултарнине пĕтĕм тĕнче курса тăрать. Сирĕн, фашистла ирсĕрсене вĕлермеллех пырса çапакан боецсен, паттăрлăхĕсем çинчен эпир нихăçан та иккĕленсе тăман.

Алă пусман.

МУХТАВЛĂ ТА ПАТТĂР КРАСНОАРМЕЕЦСЕМ!

Сирĕн ăнĕçусемпе эпир чĕререн хавасланатпăр. Анчах ку кăна мар-ха. Эпир сирĕн ĕçе пулăшма хатĕр, мĕншĕн тесен вăл ĕç—тĕрĕс ĕç, сирĕн кĕрешӳ—пирĕн кĕрешӳ.

Нимĕç империалисчĕсем чуралантарнă Европăри халăхсене ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çарăн çулпуçĕ тата апшĕ—юратнă Сталин!

Алă пусман.

Англин çар кабинечĕн çĕнĕ составĕ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, король Англин çар кабинечĕн çакăн пек составне çирĕплетнĕ (çар кабинечĕн составне правительство членĕсен пĕр пайĕ çеç кĕрет):

Черчилль—премьер-министр, пĕр вăхăтрах тата оборона министрĕн ĕçĕсемпе казначействăн пĕррĕмĕш лорчĕн (финанс министрĕн) ĕçĕсене те туса пырать.

Эттли—доминионсем тĕлĕшпе ĕçлекен министр тата премьер-министрăн заместителĕ.

Криппс—пичет сыхлавçин лорчĕ тата общинăсен палатин лидерĕ.

Джон Анкерсон—лорд, Совет председателĕ.

Иден—ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ.

Литтлтон—çар производствисене пĕтĕмĕшпе сăнаса тата контроль туса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен государственнăй министр.

Бевин—ĕçлĕх тата национальнăй повинноçăн министрĕ.

Çар производствисен министрĕ лорд Бивербрук правительство составĕнчен тухнă. Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, вăл Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тухса каять. Кунта вăл пĕрлешнĕ çĕршывсен ресурсĕсене валеçес тĕлĕшпе пуçланă ĕçе малалла туса пырать тата ăна уйрăмăн пама пултаракан ытти порученисене пурнăçа кĕртет.

Çар кабинечĕн составне правительствăн 9 членĕ кĕнĕ пулнă. Халĕ çав кабинетăн составне 7 çынна çити чакарнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Америкăпа Филиппин войскисен Батаан çурутравĕ çинчи позицийĕсем çине, уйрăмăнах сылтăм флангра, японецсем татах вăйлăн хĕссе пыма пуçланă. Япони артиллерийĕ çаплах вăйлăн персе тăрать. Япони войскисем тылра пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçни вĕсем хăйсен вăйĕсене çĕнĕ наступлени тума хатĕрленине пĕлтерет.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Англин Рангунри командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: февралĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Япони войскисем Билинг юханшывĕн участокĕнче Англи войскисен сулахай флангне атакăланă. Çапăçусем кунĕпех фронтăн пĕтĕм талкăшĕпех пынă. Япони войскисен пĕр пĕчĕк группи юханшыв урлă каçса кайнă. Англи войскисем хăйсен позицине тытса тă[illegible]

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

БАТАВИЯ, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: февралĕн 18-мĕшĕнче Япони авиацийĕ Сурабайя çине вĕçсе пырса тапăннă. Союзниксен истребителĕсем Японин бомбардировщикĕсене атакăланă, вĕсенчен пиллĕкĕшне персе антарнă. Бомба пăрахнине пула пысăках мар ишĕлӳсем пулнă.

Япони авиацийĕ Ява утравĕн хĕвелтухăç пайĕнчи аэродром çине те вĕçсе пырса тапăннă. Кунти ишĕлӳсем те пысăк мар.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Япони корреспонденчĕсем фронтран пĕлтернĕ тăрăх, Сингапур утравне йышăннă хыççăн Япони войскисем февралĕн 18-мĕшĕнче Батаан утравне те йышăннă.

ЯПОНИПЕ КИТАЙ ВĂРÇИ

Центральнăй Китайра Китай войскисем ăнăçлăн çапăçса пыраççĕ. Хубэй провинцин кăнтăр пайĕнче Джунян хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерех Китай войскисем японецсене [illegible]

Хула валли—ялхуçалăх продукчĕсем

КАЛИНИНО, февралĕн 20-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем 1941 çулта туса илнĕ ялхуçалăх продукчĕсене хуласен пасарĕсенче сутма тытăнчĕç. Кушар Юнтапари Каганович ячĕпе тăракан колхоз Шупашкар хулинчи предприятисенче ĕçлекен рабочисене йӳнĕ хакпа сутма ялхуçалăх продукчĕсем тиенĕ 4 лав ăсатрĕ. Колхоз Шупашкар пасарĕнче 300 килограмм купăста, 600 килограмм сухан, 300 килограмм пăрçа сутать.

Çавăн пекех Уйкас Юнтапари коммунистка Т. Угинева председатель пулса ертсе пыракан «Новая жизнь» колхоз та Шупашкар пасарĕнче сутма виçĕ лавпа 300 килограмм купăста, 200 килограмм пăрçа, 200 килограмм сухан, 37 литр сĕт илсе çул çине тухнă.

Вĕсемпе пĕрле Шупашкар пасарĕнче сутма Элменри Пушкин ячĕпе тăракан колхоз та ялхуçалăх продукчĕсем уйăрчĕ. Вăл Шупашкарти ĕçсыннисене 200 килограмм тăварланă купăста, 50 килограмм сысна какайĕ, 100 килограмм сухан, 60 литр сĕт, 3 килограмм çу сутать. Малта пыракан колхозсен примерĕпе районри ытти колхозсем те çитес кунсенче ялхуçалăх продукчĕсене хула пасарĕсенче сутма тытăнаççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Йĕлтĕрçĕсен республикăри заочнăй ăмăртăвĕ

Кăçалхи хĕл вăхăтĕнче иртерне массăллă спорт мероприятийĕсене пĕтĕçтерсе итог тăвас тĕлĕшпе, ВЛКСМ Обкомĕ тата ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕ 1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвне туса иртерме йышăннă.

Ăмăрту кустсенче заочно пулса иртет. Пурĕ 5 куст палăртса хунă. Канашри куста—Канаш, Вăрнар, Йĕпреç, Калинински, Куславкка, Вăрмар, Тăвай районĕсем кĕреççĕ; Хĕрлĕ Чутайри куста—Етĕрне, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Элĕк районĕсем кĕреççĕ; Кувакинăри куста—Улатăр, Кувакино, Пăрачкав районĕсем кĕреççĕ; Чкаловскири куста — Шăмăршă, Чкаловски, Первомайски, Елчĕк, Комсомольски районсем кĕреççĕ; Шупашкар хулинчи куста—Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шупашкар, Ишлей районĕсем тата Шупашкар хули кĕреççĕ.

Ăмăрту пулакан районсенчи ВЛКСМ райкомĕсен, Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем тата физкультурăпа спортăн районсенчи инструкторĕсем судьясен коллегийĕсене туса çирĕплетме тивĕçлĕ. Çавăн пекех тата арçынсем валли 10 километрлă, хĕрарăмсем валли 3 километрлă дистанцисене те малтанах палăртса хумалла.

Положени тăрăх, кашни район ăмăртăва 10 çынран тăракан пĕр команда ярать. Унта 5 арçын, 5 хĕрарăм пулмалла. Командăна ВЛКСМ райкомĕ тата физкультурăпа спортăн районри инструкторĕ пĕрле районри чи лайăх физкультурниксене — активистсене, профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулнă кросĕнче мала тухнă юлташсене кĕртеççĕ. Ăмăртăва хутшăнакансем 17 çултан çамрăк пулмалла мар. Кашнинех медицина енĕпе тĕрĕслӳ витĕр тухмалла.

Зачетне арçынсене те, хĕрарăмсене те пĕрле илсе шутлаççĕ. Командăри пур членсем те кăтартнă дистанцие чи сахал вăхăтра тухнă пулсан, çав команда мала тухать.

Ăмăртăвăн итогне тунă хыççăн çав кунах телефонпа ВЛКСМ обкомне пĕлтермелле, тепĕр кунне ăмăрту мĕнле иртни çинчен ВЛКСМ Обкомне тата физкультурăпа спортăн республикăри комитетне тĕплĕн çырса ямалла.

Мала тухнă командăсемпе уйрăм участниксене ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спортăн республикăри комитечĕн грамотине параççĕ.

ВЛКСМ райком секретарĕсен тата физкультурăпа спортăн районсенчи инструкторĕсен февралĕн 25-мĕш тĕлне кашни районрах команда йĕркелемелле, унтан кашни кунах тренировкăсем иртерес ĕçе пуçăнмалла.

Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар хулинчи штабран

Юлашки вăхăтра нумай учрежденисен, предприятисен руководителĕсем, çурт хуçисем тата хваттерсенче пурăнакансем çутта маскировка тумалли правилăсене пăхăнса пыма пăрахрĕç. Хăшпĕрисене урам комитечĕсемпе квартал комитечĕсем тата милици оргăнĕсем темиçе хутчен асăрхаттарнă пулин те, çутта маскировка тумалли правилăсене юриех пăсаççĕ.

Çапла, сăмахран, макарон фабрикинче смена начальникĕ пулса ĕçлекен Е. А. Золова, К. Маркс урамĕнчи 72-мĕш №-лĕ çуртра пурăнакан И. П. Иванов —«Красный мебельщик» артелĕн рабочийĕ, çăкăр пĕçерекен комбинат рабочийĕ—В. Д. Чернов, тир-сăран заводĕн общежитийĕн коменданчĕ П. Г. Тонько т. ыт. те çутта маскировка тумалли правилăсене тăтăшах пăснă, çавăншăн вĕсене адмкомисси штраф тӳлеттернĕ тата çавнашкал ĕçсене малалла татах туса пырсан, уголовнăй йĕркепе ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарнă.

Çакăн пек тунисем сиенлĕ, сурккуна сывлăхарса килнĕ майĕпе уйрăмах хăрушă пулнине, вĕсене пула пысăк инкек-синкек пулма пултарнине шута илсе, МПВО штабĕ мĕнпур предприятисен, учрежденисен, организацисен руководителĕсене, коммунальнăй тата ведомствăсен çурчĕсемпе общежитийĕсен комендантĕсене, хулари пур çынсене те çутта маскировка тумалли пур правилăсене те пăхăнса пыма хушать.

Милици оргăнĕсен, хула комендатурин, урамсемпе кварталсен комитечĕсен çутта маскировка тумалли правилисене пăснине асăрхассине вăйлатмалла, çутта маскировка тумалли правилăсене пăсакансене çирĕп ответ тыттармалла, çав правилăсене юри пăссе пыракансене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла.

Шупашкар хулин МПВО начальникĕ И. ЗОЛОТНИКОВ.

Пĕлтерӳ

Февралĕн 21-мĕшĕнче 8 сехетрен пуçласа 10 сехетчен каçхине ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпунктĕнче докладчиксем, агитаторсем тата агитколлектив руководителĕсем валли группăллă консультаци пулать. Консультаци теми: «Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 24 çул тултарни тата нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкас задача».

Консультант—ВКП(б) хула комитечĕн лекторĕ Орленко юлташ.

ВКП(б) Шупашкар Хула Комитечĕн агитпункчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

На основании решения Исполкома Чебоксарского Горсовета депутатов трудящихся от 22 апреля 1940 года, Чебоксарский горкомхоз доводит до сведения всех учреждений, предприятий, учебных заведений и частных лиц, что места под свалку отбросов, мусора, навоза и других нечистот отведены:

а) По Вурнарскому тракту—поля совхоза Росглаввино (за кладбищем).

б) По Казанскому тракту—за быв. гаражом Чувашстройтреста — поле колхоза М. Горький.

в) По Канашскому тракту—за переездом через железную дорогу на расстоянии полкилометра — поле колхоза «Социализм».

Для свалки снега и оскола, удаленного с улиц, отводится овраг за дезостанцией по Больничному переулку и на лед р. Волги ниже устья р. Чебоксарки, не ближе 200 метров от берега.

За несоблюдение настоящего об'явления виновные подвергаются штрафу.

Горкомхоз.

ТРЕБУЮТСЯ ДЛЯ РАБОТЫ В ГОРОДЕ ЧЕБОКСАРАХ

проектировщики, инженеры и техники-строители, сантехники и энергетики, а также чертежники-копировщики.

С предложением обращаться письменно: почтовый ящик № 4 и по телефону № 5—29.

3—1 Дирекция.

ПРОПАЛА кобыла,

кличка—„Димка“, 6 лет, караковой масти рост 133 см. Знающих просим сообщить по адресу: Чебоксарский район, Чувашской АССР, п. о. Кугесево, дер. Кугесево, правлению колхоза „Трактор“.

ПРОПАЛА кобыла,

кличка—„МАШКА“, 15 лет, светло-серой масти, рост 134 см. Знающих просим сообщить по адресу: Чебоксарский район, Чувашской АССР, п. о. Кугесево, дер. Кугесево, правлению колхоза „Трактор“

Заводу требуются:

инженеры, техники-конструкторы и техники по холодной обработке металла, экономисты плановики, нормировщики, стеклографист, инженер-электрик-монтажник.

Рабочие следующих специальностей:

токари, фрезеровщики, строгальщики, слесари, сверловщики, электро-монтеры, шлифовщики, заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по автоделу, жестянщики, литейщики, модельщики, сварщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, машинист компрессора, наборщик типографии, гальваники, слаботочники, радист, ящечники-упаковщики, плотники, столяры, каменщики, шорник, возчики, печник, дворники, уборщицы, кочегары-истопники и подсобные рабочие.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.
Вахтеры-охранники с зарплатой до 300 руб. в месяц.

ОБРАЩАТЬСЯ: Отдел кадров.—Ленинградская ул., дом № 38, после 12 часов дня.

3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропаганда тата парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

Ц. 336 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 58 64 п. л.